27-мӗш çул тухать. Хакӗ 20 пус.

1944
ИЮЛЬ
9
ВЫРСАРНИКУН
135(6630) №

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

Чӑваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАÇАЧӖ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗӖ

Совет Союзӗн Маршалне РОКОССОВСКИЕ

БЕЛОРУССИРИ 1-мӗш фронт çарӗсем паян, июлӗн 8-мӗшӗнче, утлӑ çарпа танковӑй соединенисем тӑшмана аякран çавӑрса илмелли маневр тунине тата çав вӑхӑтрах пехота умран атакӑланине пула, Белоруссин область центрне — БАРАНОВИЧИ хулине — паха чугун çул узелне тата нимӗçсен оборонин БЕЛОСТОКПА БРЕСТ хулисем патнелле каймалли вырӑнсене хӳтӗлекен хӑватлӑ çирӗплетнӗ районне туртса илнӗ.

БАРАНОВИЧИ хулипе Барановичи тавра шӗнчи çирӗплетнӗ района туртса илессишӗн пынӑ çапӑçусенче ЛУЧИНСКИЙ генерал-лейтенантӑн, БАТОВ генерал-полковникӑн, ПЕРХОРОВИЧ генерал-майорӑн, ШВАРЕВ генерал-майорӑн, АЛЕКСЕЕВ генерал-майорӑн, ИВАНОВ генерал-майорӑн, СЫЧЕВ полковникӑн, ВЛАДЫЧАНСКИЙ генерал-майорӑн, ДАНИЛОВ генерал-майорӑн, КУЗНЕЦОВ генерал-майорӑн, БОРИСОВ генерал-майорӑн, ФРОЛЕНКОВ генерал-майорӑн, ГОРИШНЫЙ генерал-майорӑн, ДЖАНДЖГАВА полковникӑн, МОРОЗОВ полковникӑн, ГРЕБЕННИК генерал-майорӑн çарӗсем; ПЛИЕВ генерал-лейтенантӑн, ПОПРИКАЙЛО полковникӑн, ТУТАРИНОВ генерал-майорӑн, ГОЛОВСКИЙ генерал-майорӑн Кубань кавалерисчӗсем; танковӑй çарсен генерал-майорӗн БАХАРОВӐН, КУЗНЕЦОВ полковникӑн, БАРАНЮК полковникӑн, БОЙКО подполковникӑн, ТРУШКИН подполковникӑн, КОСТЮЧЕНКО подполковникӑн, ВЕРЛАНЬ подполковникӑн, ГАЦУК подполковникӑн, СОКОЛОВ подполковникӑн, ТРУЧИН майорӑн танкисчӗсем; КИРИЛЛОВ полковникӑн, ДАНИЛЬЧЕНКО майорӑн, АФАНАСЬЕВ майорӑн, КИСЕЛИЦКИЙ подполковникӑн, КУДЫМОВ подполковникӑн, ХЛОПЕНКО подполковникӑн, НОВИКОВ подполковникӑн, СОЛОМОННИКОВ майорӑн, ПОДОПРИГОРА майорӑн, ЯКОВЛЕВ капитанӑн, ИБРАГИМОВ капитанӑн, КОРЧАГИН полковникӑн, ШМИГЕЛЬ майорӑн артиллерисчӗсем; авиаци генерал-полковникӗн РУДЕНКӐН, авиаци генерал-лейтенанчӗн ОСИПЕНКӐН, авиаци генерал-майорӗн ДЗУСОВӐН, авиаци генерал-майорӗн КОМАРОВӐН, ЧИРВА полковникӑн, ШЕРСТЮК подполковникӑн летчикӗсем тата инженери çарӗсен генерал-майорӗн ИОФФЕН, ВОРОНОВ полковникӑн сапёрӗсем чапа тухнӑ.

Тунӑ çӗнтерӗве яланлӑха палӑртса хӑварас тесе, БАРАНОВИЧИ хулипе Барановичи тавра шӗнчи çирӗплетнӗ района туртса илессишӗн пынӑ çапӑçусенче уйрӑмах чапа тухнӑ соединенисемпе чаçсене «БАРАНОВИЧСКИ» тесе ят пама тата орденсемпе наградӑлама тӑратас.

Паян, июлӗн 8-мӗшӗнче, 22 сехетре хамӑр Тӑван çӗршыв столици МУСКАВ, инçӗр çирӗм тӑватӑ тупӑпа çирӗм хут пӗр харӑс персе, БЕЛОРУССИРИ 1-мӗш фронтӑн паттӑр çарӗсене, БАРАНОВИЧИ хулине туртса илнӗскерсене, Тӑван çӗршыв ячӗпе салют парать.

Питӗ чаплӑ çапӑçнӑшӑн эсир ертсе пыракан çарсене, БАРАНОВИЧИ хулине туртса илессишӗн пынӑ çапӑçусенче пулнӑскерсене, ТАВ ТӐВАТӐП.

Хамӑр Тӑван çӗршывӑн ирӗклӗхӗпе ниçама пӑхӑнманлӑхӗшӗн çапӑçса вилнӗ геройсене ӗмӗр-ӗмӗр мухтав!

Нимӗç захватчикӗсене — вилӗм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзӗн Маршалӗ И. СТАЛИН.

1944 çулхи июлӗн 8-мӗшӗ.

КОМБАЙНСЕНЕ ЛАЙӐХРАХ ТА ХӐВӐРТРАХ ЮСАР

Колхозсен уйхирӗсенче тулӑх тырпул çитӗнет. Халӗ ӗнтӗ колхозсемпе МТС-сем умӗнче пӗр тӗп задача — тырпула кӑтартуллӑн пӑхса çитӗнтерсе, ӑна пухса кӗме пур енчен те лайӑх хатӗрленсе, вӑхӑтра та тӑкаксӑр пухса кӗртесси пулса тӑрать.

Тырпулсене пухса кӗме хатӗрленес ӗçре комбайнсене вӑхӑтра та лайӑх юсани пысӑк вырӑн йышӑнать. Тырпулсене пухас ӗçре комбайнсемпе анлӑн та туллин усӑ курма тивет, мӗншӗн тесен чылай колхозсенче ӗç вӑйӗ, уйрӑмӑнах туртӑм вӑйӗ çителӗксӗррине машина вӑйӗ витмелле. Çакӑ вӑл комбайнсемпе молотилкӑсене вӑхӑтра та лайӑх юсама хушать.

Кӑçал пирӗн республикӑри колхозсен уйхирӗсенче 373 комбайн ӗçлемелле. Çак комбайнсем лайӑх, пӗр чарӑнмасӑр тата пысӑк туптӑçпа ӗçлеччӗр тесен, вӗсене вӑхӑтра тата лайӑх юсаса хатӗрлемелле. Гӗпреç, Шӑхасан, Красноармейски МТС-сем тӗрӗс турӗç, вӗсем çуракине вӗçленӗ хыççӑнах комбайнсене юсама тытӑнчӗç. Вӗсем халӗ комбайнсене юсаса пӗтернӗ, вӗсен комбайнӗсене государство комиссийӗсем йышӑннӑ. Ытти хӑшпӗр МТС-сем те комбайнсене пайн-ыранах юсаса пӗтерӗç.

Анчах та нумай МТС-сенче комбайнсемпе молотилкӑсене юсас ӗç ытла та япӑх пырать. Июлӗн пӗрремӗшӗ тӗлне пирӗн республикӑри МТС-сем, Чӑваш АССР Совнаркомӗпе ВКП(б) обкомӗ çирӗплетнӗ график тӑрӑх, 280 комбайна юсаса пӗтермеллеччӗ. Чылай МТС-сем начар ӗçленине пула республика çак графика пурнӑçлаймарӗ, пурӗ те 109 комбайн кӑна юсанӑ. Молотилкӑсене юсасси те çителӗксӗр пырать. Тырӑ выракан тата тырӑ тасатакан машинӑсене юсама тытӑнманпа пӗрех. Комбайнсемпе молотилкӑсене юсас ӗç уйрӑмӑнах Кувакино, Улатӑр, Сӗнтӗр, Шупашкар, Етӗрне, Сӗнтӗрвӑрри тата ытти хӑшпӗр МТС-сенче юлса пырать.

Иртнӗ çул комбайнсемпе молотилкӑсене вӑхӑтра юсаман пирки Пӑрачкав, Кувакино, Улатӑр, Канаш МТС-ӗсенче пурӗ 12 комбайнпа тырпулсене пухас ӗçре усӑ курман. Иртнӗ çулхи йӑнӑшсемпе çитменлӗхсене кӑçал туммалла мар. Анчах Улатӑр, Кувакино МТС-сем кӑçал те комбайнсемпе молотилкӑсене юсас ӗçе чӑтма çук начар туса пыраççӗ-ха. Улатӑр МТС-ӗн 22 комбайн, 12 молотилка юсамалла, анчах та июлӗн 1-мӗшӗ тӗлне пурӗ те 1 комбайн тата 1 молотилка кӑна юсанӑ. Кувакино МТС-ӗ 36 комбайн, 19 молотилка юсамалла, кунта çак вӑхӑта çитсе те 4 комбайн кӑна юсанӑ, молотилкӑсене пӗрре юсама тытӑнман. Çакна палӑртмалла: Кувакино, Улатӑр, Пӑрачкав МТС-ӗсенче комбайнсемпе молотилкӑсем, ытти МТС-семпе танлаштарсан, пиçвиçӗ хут ытларах. Çак тӗслӗх вӑл хӑех асӑннӑ МТС-сем мӗнле хӑвӑртлӑхпа ӗçлемелли çинчен калать. Улатӑрта кирлӗ пайсене вырӑнтах хатӗрлеме пур условисем те пур. Кунта ӗç начар пыни пӗтӗмпех МТС-ӑн çавӑрӑнӑçусӑр тата васкаман руководителӗсенчен килет.

Сӗнтӗр, Шупашкар, Канаш МТС-ӗсенче çураки ӗçӗ хӗрсе пынӑ вӑхӑтра тракторсене юсама тиврӗ. Çак япӑх тӗслӗхсем хӑшпӗр МТС-сен руководителӗсене нимӗ те вӗрентмерӗç пулмалла. Комбайнсемпе молотилкӑсене юсассине кунта та пиçсӑлтавсӑрах тӑсса пыраççӗ. Етӗрне МТС-ӗ пурӗ те 8 комбайн кӑна юсамалла, анчах вӑл çак ӗçе тытӑнманпа пӗрех. Комбайнерсемпе токарьсене, слесарьсемпе ытти рабочисене çак вӑхӑта çитсе те юсас ӗçе кирлӗ пек явӑçтарман. Сӗнтӗрвӑрри МТС-ӗнче вара çак вӑхӑта çитсе те мастерскойне йӗркелесе яман.

Уйрӑм МТС-сенче комбайнсене тытса усрасси çине те кирлӗ пек пӑхмаççӗ. Канаш МТС-ӗнче 3 комбайнӑн уйрӑм пайӗсене салатса пӗтернӗ, пӗр комбайне вара пӗтӗмпех юрӑхсӑра кӑларнӑ.

Чӑваш АССР Совнаркомӗпе ВКП(б) обкомӗ комбайнсене, молотилкӑсене, тырӑ вырмалли тата тырӑ тасатмалли машинӑсене, локомобильсемпе двигательсене июлӗн 20-мӗшӗнчен кая юлмасӑр юсаса пӗтерме хушрӗç.

Çак постановление пӗр пӑркаланмасӑр пурнӑçласа пырасси кашни МТС-ӑн паянхи тӗп задачи пулса тӑрать, ӑна пурнӑçлассишӗн мӗнпур вӑя хурса ӗçлемелле. Кашни МТС-рах хӑйӗн мастерскойӗ пулмалла. Комбайнерсемпе слесарьсене, токарьсемпе ытти рабочисене пурне те комбайнсемпе молотилкӑсене юсас ӗçе явӑçтармалла. МТС-сенче кивӗ пайсене çӗнетессине тата киввисене юсассине организацилемелле.

Комбайнсемпе ытти машинӑсем валли запаслӑ пайсене чылайӗшне вырӑнтах — МТС-сен мастерскойӗсенче, предприятисемпе заводсенче туса хатӗрлемелле. Совнаркомпа ВКП(б) обкомӗн бюровӗ республикӑри промышленность тата чугун çул транспорчӗн предприятийӗсене, вырӑнти промышленность артелӗсене комбайнсемпе ытти машинӑсен запаслӑ пайӗсене хатӗрлеме задани çирӗплетсе панӑччӗ. Анчах та çак питӗ ответлӑ задание чылай предприятисем пурнӑçласа пымаççӗ-ха. Канашри вагонсем юсакан завод договорсем тӑрӑх хӑй çине илнӗ обязательствӑна 35 процент кӑна пурнӑçланӑ. Якунин юлташ главнӑй инженер пулса ӗçлекен завод МТС-семпе килӗшнӗ тӑрӑх 52 магнетто юсаса çӗнетмелле, анчах та МТС-сем 28 магнетто халӗ те илеймеççӗ-ха. Предприятисемпе артельсен руководителӗсен, унти парторганизацисен çак ответлӑ заказа, государство заказӗ вырӑнне шутласа, халех пурнӑçлама тӑрӑшмалла.

ВКП(б) райкомӗсен МТС-ри партипе комсомол организацийӗсене тивӗçлипе пулӑшса пымалла. МТС-ӑн пӗтӗм коллективне комбайнсемпе тырпулсене пухнӑ çӗрте кирлӗ машинӑсене юсас ӗçе мобилизацилемелле, малта пыракансен опытне ытти сем хушшинче сармалла, массӑллӑ анлантарулла ӗçе тӑтӑшах туса пырса, социализмлӑ ӑмӑртӑва анлӑн сарса ямалла.

Совет Информаци Бюровӗнчен

ИЮЛӖН 7-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

Июлӗн 7-мӗшӗнче пирӗн çарсем ПЕТРОЗАВОДСК хулинчен хӗвеланăçнерехре тӑшманпа çапӑçса темиçе ял туртса илнӗ, вӑл шутра — САРА-ГОРА, РЕККУ-СЕЛЬГА, КОЛАТ-СЕЛЬГА, ВАГА-ЯРВИ.

ПОЛОЦК хулинчен çурçӗртерехре тата çурçӗр-хӗвеланăçнерехре пирӗн çарсем тӑшманпа çапӑçса малалла куçса пынӑ, 30 ял ытла туртса илнӗ, вӑл шутра — 2-МӖШ ПОРЕЧЬЕ, ПРЫБЫТКИ, СЕЛЯВЩИНА, ЯНКОВИЧИ, БРОДЫ, КОНЮХОВО, ЗАМОШЬЕ. ПОЛОЦК хулинчен кӑнтӑртарахри вӑрмансенче пирӗн чаçсем нимӗç салтакӗсемпе офицерӗсен пӗр ушкӑнне тытнӑ илнӗ. Тыткӑна илнисем хушшинче — 246-мӗш пехотнӑй дивизин командирӗ МЮЛЛЕР-БЮЛОВ генерал-майор пур.

МИНСК хулинчен çурçӗр-хӗвеланăçнерехре тата хӗвеланăçнерехре пирӗн çарсем наступление çаплах вӑйлатса пынӑ, Вилейка облаçӗнчи район центрӗсене ОШМЯНЫ хулине тата ОСТРОВЕЦ ялне туртса илнӗ, çавӑн пекех тата тӑшманпа çапӑçса халӑх пурӑнакан ытти 250 пункта ытла йышӑннӑ, вӑл шутра — КЕМЕЛИШКИ, БЫСТРИЦА, СЫМОНЕЛИ, ВОЗДВИЖЕНСК, ВОРНЯНЫ, ДУБНИКИ, ЛОША, ГУДОГАЙ, ЦЕХАНЫ, СТРИПУНЫ, БОГДАНОВ, ВИШНЕВ, ТОКАЖИШКИ ятлӑ пысӑк ялсем тата СОЛЫ, ОШМЯНЫ, ГУДОГАЙ чугун çул станцийӗсем.

МИНСК хулинчен кӑнтӑр-хӗвеланăçнерехре пирӗн çарсем çаплах наступлени туса пынӑ, Барановичи облаçӗнчи район центрне МИР хулине туртса илнӗ, çавӑн пекех тата тӑшманпа çапӑçса халӑх пурӑнакан ытти 80 пункта ытла йышӑннӑ, вӑл шутра — НАЛИБОКИ, ДЕРЕВНА, БЕРЕЖНО, ЗАЯМНО, ПЕРЕТОКИ, СИМОКОВО ятлӑ пысӑк ялсем тата КОЛОСОВО чугун çул станцийӗ.

МИНСК хулинчен хӗвелтухăçнерехре пирӗн çарсем тӑшманӑн çавӑрса илнӗ чаçӗсене пӗтерес тӗлӗшпе çапӑçнӑ. Кун каçиччен 4.000 нимӗç салтакӗпе офицерне çитиччен пӗтерсе тӑкнӑ, 3.000 çын ытла тыткӑна илнӗ. Тыткӑна илнисем хушшинче—78-мӗш штурмовой дивизин командирӗ ТРАУТ генерал-лейтенант пур.

БАРАНОВИЧИ енче пирӗн çарсем, тӑшман хирӗç тӑнине çӗнтере-çӗнтере, çаплах наступлени туса пынӑ, халӑх пурӑнакан 50 пункта ытла туртса илнӗ, вӑл шутра — САВИЧИ, ЛИХОТЕЛЬЦЕ, ПОДЛЕСЕЙКИ, ЛИТВА (БАРАНОВИЧИ хулинчен 7 километр кӑнтӑр-хӗвелтухăçнерехре), РУСИНЫ, ЛУКИ, КРИВОШИН ятлӑ ялсем тата ПОГОРЕЛЬЦЫ, ГОНЧАРЫ, КРИВОШИН чугун çул станцийӗсем.

ПРИПЯТЬ шывӗн вӑтам тӑрӑхӗнчи районра, МОЗЫРЬ хулинчен хӗвеланăçнерехре, пирӗн çарсем Пинск облаçӗнчи район центрне СТОЛИН хулине туртса илнӗ, çавӑн пекех тата тӑшманпа çапӑçса НАДУБОВО, ЧЕРЕТЯНКА, ЛЮДЕНЕВИЧИ, ЗАГОРБАШЬЕ, ДЕДОВКА, БРОНИСЛАВ, ЗАПРОСЬЕ, ВИЛЬЧА ятлӑ ялсене йышӑннӑ.

Фронтӑн ытти участокӗсенче паллӑ улшӑнусемех пулман.

Июлӗн 6-мӗшӗнче пирӗн çарсем мӗнпур фронтсенче нимӗçсен 34 танкне çӗмӗрсе тӑкнӑ. Сывлӑшри çапӑçусенче тата зенитнӑй артиллери тӑшманӑн 25 самолетне персе ӳкернӗ.

☆ ☆ ☆

ПИРӖН АВИАЦИ БРЕСТ ТАТА ДВИНСК ЧУГУН ÇУЛ УЗЕЛӖСЕНЕ ТАПАННИ

Июлӗн 7-мӗшӗ ыран тенӗ чух çӗрле пирӗн авиаци Брест тата Двинск чугун çул узелӗсене тапаннӑ, тӑшман эшелонӗсемпе çар склачӗсем çине бомбӑсем пӑрахнӑ. Тапаннӑ вӑхӑтра Брест чугун çул узелӗнче нимӗçсен 12 çар эшелонӗ пулнӑ. Бомбӑсем пӑрахнине пула темиçе поезд çӗмӗрӗлсе пӗтнӗ. Пушарсем тухнӑ, пушарсенче 5 вӑйлӑ взрыв пулнӑ.

Бомбӑсем пӑрахнине пула, Двинскри пассажир тата тавар станцийӗсенче вӑйлӑ пушарсем тухнӑ, чугун çул вагонӗсем тата çар склачӗсем çуннӑ. Пушарсенче взрывсем нумай пулнӑ, вӗсенчен виçӗ взрывӗ питӗ вӑйлӑ пулнӑ. Тавар станцийӗнче горючи склачӗ сирпӗнсе кайнӑ. Тапану вӗçленнӗ тӗлелле чугун çул узелӗн пӗтӗм территорине вут хыпса илнӗ.

☆ ☆ ☆

Полоцк хулинчен çурçӗртерехре тата çурçӗр-хӗвеланăçнерехре пирӗн çарсем çаплах наступлени туса пынӑ. Пӗр соединени чаçӗсем, тӑшман хирӗç тӑнине çӗмӗрсе тӑкса, Дрисса шывӗ патне пырса тухнӑ. Совет боецӗсем пӗр чарӑнса тӑмасӑр çав шыв урлӑ каçнӑ та унӑн сылтӑм хӗрринче плацдарм туртса илнӗ. Нимӗçсем, пирӗн подразделенисене каялла ывӑтса яма хӑтланса, темиçе хут контратака тунӑ. Пехотӑпа пӗрле пынӑ совет артиллерисчӗсем тӑшмана питӗ тӗл персе çапаласа янӑ. Плацдарма аслӑлатса, пирӗн çарсем Конюхово ялне туртса илнӗ, çапла вара Дисна хулипе Идрица хули хушшинчи шоссе çулне татнӑ. Çак участокри çапӑçусенче нимӗç пехотине пӗр батальона çити пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Минск хулинчен çурçӗр-хӗвеланăçнерехре тата хӗвеланăçнерехре тӑшман фронта çӗнӗ резервсем илсе пырать, вӗсене çавӑнтах çапӑçӑва кӗрте-кӗрте ярать. Паян пирӗн наступлени туса пыракан чаçсем фронтӑн çак участокне нимӗçсен халь çеç çитнӗ 170-мӗш дивизийӗн батальонне аркатса тӑкнӑ. Наступление вӑйлатса пырса, пирӗн çарсем Ошмяны хулине туртса илнӗ. Çавӑн пекех тата Вилейка облаçӗнчи район центрне Островец ялне тата халӑх пурӑнакан ытти 250 пункта ытла йышӑннӑ. Туллимар Дапнӑйсем тӑрӑх, 300 нимӗç салтакӗпе офицерне çити пӗтерсе тӑкнӑ. 6 танк, 22 тупӑ, 130 автомашина тата ытти трофейӑсем те туртса илнӗ. Тыткӑна нумай илнӗ.

* * *

Минск хулинчен хӗвелтухăçнерехре пирӗн çарсем тӑшманӑн çавӑрса илнӗ группировкине пӗтерсе тӑкассишӗн çапӑçнӑ. Нимӗçсем, çавӑрса илнӗ ункӑран тухма хӑтланса, ăçта та пулин начартарах хӳтӗлекен вырӑн тупма тӑрӑшаççӗ, пӗр вырӑнтан тепӗр вырӑна пырса çапӑнаççӗ. Пирӗн çарсем, çав тери хӑвӑрт пыра-пыра çапса, тӑшман группировкине уйрӑм пайсене вакласа пӗтернӗ. 30 тупӑ, 72 миномет, 360 пулемет, 6 танкпа хӑйтӗллӗн çӳрекен тупӑ пӗтерсе тӑкнӑ. Нимӗçсенчен 3 танк, 360 автомашина тата тӗрлӗрен çар хатӗрӗсем тиенӗ 400 лаша çити туртса илнӗ. Паян тыткӑна илнӗ нимӗçсем хушшинче — нимӗçсен 78-мӗш штурмовой дивизин командирӗ Траут генерал-лейтенант пур. Ку генералӗнтӗ июнӗн 23-мӗшӗнче наступлени пуçласа янӑранпа тыткӑна илнӗ 11-мӗш генерал пулать.

* * *

Барановичи енче пирӗн çарсем наступлени туса пынӑ. Тӑшман, пирӗн çарсене Барановичи районне тухма чарасшӑн хӑтланса, хытӑ хирӗç тӑрать. Нимӗçсем хирӗç тӑнине çӗнтере-çӗнтере, пирӗн чаçсем халӑх пурӑнакан 50 пункта ытла туртса илнӗ. Пӗр чаçри боецсем, çав тери хӑвӑрт маневр туса, контратака тума хатӗрленсе çитнӗ нимӗçсене çавӑрса илнӗ. 600 гитлеровеца ытла пӗтерсе тӑкнӑ. Тепӗр участокра совет подразделенийӗсем вӑрмантра тӑшманӑн 200 салтакпа офицертан тӑракан ушкӑнне вӗлерсе пӗтернӗ.

* * *

Припять шывӗн вӑтам тӑрӑхӗнчи районра пирӗн çарсем Столин хулине туртса илнӗ, нимӗçсене темиçе ялтан хӑваласа кӑларнӑ. Совет чаçӗсем пыра-пыра çапнипе каялла чакакан тӑшман йывӑр çухатусем тӳсет. Пирӗннисем 4 артиллери батарейине, боеприпас складне тата 50 лаша тытса илнӗ.

Петриков хули районӗнче пирӗн боецсем фашистсен концентрациллӗ виçӗ лагерӗнчен 8.000 ытла мирлӗ совет гражданине ирӗке кӑларнӑ. Çав совет çыннисене гитлеровецсем Германи каторгине хӑваласа кайма хатӗрленнӗ. Совет çарӗсем çав тери хӑвӑрт малалла куçса пыни чурасемпе суту-илӳ тӑвакан фашистсен ирсӗр шухӑшне пурнӑçа кӗртме паман.

* * *

Пирӗн авиаци Çурçӗр Норвегири Киркинес портне тапаннӑ. Бомбӑсем тӳрех пырса тивнипе тӑшманӑн 4.000-шер тонна таякан 2 транспортне шыва путарнӑ, тепӗр 10.000 тонна таякан транспортне сиенленӗ. Унсӑр пуçне, нимӗçсен çар склачӗсене сирпӗнтерсе янӑ. Портра пушарсем тухнӑ, çав пушарсем пӗр талӑк хушши ытла пынӑ.

Хӗçпӑшал промышленноçӗ çур çулхи плана тултарнӑ

Хӗçпӑшал промышленноçӗ пӗрремӗш çур çулхи государство планне ăнăçлăн пурнăçланă. Пӗлтӗрхи пӗрремӗш çур çулпа танлаштарсан, кӑçал çапӑçу техники, уйрӑмах йывӑр артиллери, патронсем, çар приборӗсем нумай ытларах туса кӑларнӑ.

Совет Союзӗн Хӗçпӑшал наркомачӗн предприятийӗсенче çӗнӗ йышши хӑватлӑ артиллерин, стрелок хӗçпӑшалӗсен тата вӑрçӑ приборӗсен тӗслӗхӗсене туса кӑларас тӗлӗшпе нумай ӗçленӗ.

Çав Наркоматӑн завочӗсенчен нумайӗшӗ социализмлӑ обязательствӑсене ăнăçлăн пурнăçланă. (ТАСС).

СССР-ти медицина наукисен академине тунӑ

ССР Союзӗн Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ йышӑннӑ тӑрӑх, СССР Сывлӑх Халӑх Комиссариачӗ çумӗнче СССР-ти медицина наукисен академийӗ — медицина тӗлӗшпе ӗçлекен наукӑсен аслӑ учрежденийӗ — уçӑлать.

Академин тӗп задачисем медицинӑри теорипе практика ыйтӑвӗсене тӗпчесе вӗренесси тата медицина наукине малалла халӑх сывлӑхне сыхлама кирлӗ пек, çӗршыва хӳтӗлеме кирлӗ пек аталантарасси пулать.

Медицина наукисен академийӗн составӗнче виçӗ отделени пулать: медицинӑпа биологи наукисен отделенийӗ, гигиена, микробиологи, эпидемиологи отделенийӗ тата клиника медицини отделенийӗ. (ТАСС).

БЕЛОРУССИРИ 2-МӖШ ФРОНТ. Чӑваш Иван Матвеев вӑрçӑччен Шупашкарти пӗр заводра ӗçленӗ. Халӗ вӑл — артиллерист, разведчик-наблюдатель. Командовани панӑ заданисене питӗ лайӑх пурнӑçланӑшӑн ӑна III-мӗш степень Мухтав орденӗ парса наградӑланӑ.

Ӳкерчӗк çинче: разведчик-наблюдатель И. Матвеев.

В. ШАРОВСКИЙ фотоӳкерчӗкӗ. (ТАСС фотохроники).

РЕСПУБЛИКА УЙХИРӖСЕНЧЕ

Малтанхи утта—государствӑна

КӲКЕÇ, июлӗн 8-мӗшӗ. (Телефонпа). Районри колхозсем июлӗн 5—6-мӗшӗсенче утӑ çулма тухрӗç. Атӑл леш енчи, Çавал леш енчи улӑхсенче иртен пуçласа касчен утӑ çулаççӗ. Çава тытма пултаракан арçынсемпе хӗрарӑмсем пурте улӑхра, хӗрӳ ӗçре. Шӑнкасри «Чембек» колхозра К. Скворцова, М. Степанова, Е. Артемьева, П. Семенова колхозницӑсем кашни кунах нормӑна 120—130-шар процент тултараççӗ.

Чылай колхозсенче утӑ çулакансене улӑхрах вӗри апат çитереççӗ. Тренкассинчи «Актив» колхозри 68 çулхи колхозница П. Савельева юлташ утӑ çулакансем валли çӑкӑр пӗçерет. Отечественнӑй вӑрçӑ инвалиӗ Е. Петров юлташ улӑхра яшка пӗçерет, Ф. Андреев юлташ колхозниксен çависене юсать, утӑ çулакансем каннӑ вӑхӑтра вӗсене хаçат вуласа парать.

Районри чылай колхозсем чи паха утта государствӑна параççӗ. «Память Ленина» тата Водопьянов ячӗпе тӑракан колхозсем 10-шар центнер утӑ государствӑна леççе панӑ.

Г. ПЕТРОВ.

Красноармейски район çӗртме туса пӗтернӗ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. (Телефонпа, хамӑр корр.). Районри колхозсем çӗртме тумалли плана ытлашшипех тултарчӗç. Халӗ утӑ çулас ӗç хӗрӳллӗ пырать. Улӑхри çарансене 40 процента яхӑн çулса пухнӑ.

Ильич ячӗпе тӑракан колхозра халӗ çӗрулмипе пахча-çимӗçсене çумлаççӗ. «Шимар» колхоз çӗртме сухине 85 гектар тунӑ, 15 гектар çинчи çӗрулмине çумланӑ. Çак колхоз 36 тонна силос хывнӑ.

С. ШАДИН.

Тырпулсене пӗр тӑкаксӑр пухӑпӑр

Ишлей районӗнчи «Красный танк» колхоз хирӗсенче тырӑсем лайӑх çитӗнеççӗ, колхозниксемпе колхозницӑсем вӗсене пухса илме хатӗрленеççӗ. Пирӗн колхозра 70 çын уйхир ӗçӗнче ӗçлеме пултараççӗ, вӗсенчен нумайӗшӗ хӗрарӑмсем. Калас пулать, вӑрçӑ пынӑ çулсенче вӗсем «арçын ӗçӗсене» лайӑх вӗренсе çитрӗç, нумайӗшӗ ӗçре ертсе пыма та пултараççӗ. Сӑмахран, Н. Ф. Павлова юлташ бригадир пулса ӗçлет. Колхозри ӗçе ватӑ çынсем те хутшӑнаççӗ. Григорий Яковлевич Павлов юлташ 65 çулта, ака вӑхӑтӗнче вӑл пахалӑх инспекторӗ пулса ӗçлерӗ, сухаçӑсене ӗçре нумай пулӑшрӗ. Ӗçре тӗрлӗ чӑрмавсем тӗл пулаççӗ. Хӑшин плугӗ ăпăх кая пуçлать, теприн хӑмӑчӗ лаша кӑкӑрне суранлатма тытӑнать. Григорий Яковлевич пурне те паха канаш парать, ӗçре пулӑшать.

Эпир çӗртме туса пӗтертӗмӗр, çӗртме пуссине мӗнпур пек тислӗке кӑлартӑмӑр. Пӗрчӗллӗ тата пӑрçа йышши тырӑсене çум-кураксенчен пӗтӗмпех тасатнӑ, халӗ çӗрулмине çумлатпӑр тата йӑран хушшисене кӑпӑшкалатса, çӗрулми купалатпӑр.

Тырпулсене пухса кӗртнӗ чухне кирлӗ машинӑсене пӗтӗмпех юсаса çитернӗ. Çак ӗçре уйрӑмӑнах М. Смирнов тата Е. Павлов юлташсем аван ӗçлерӗç. Çурласем çителӗклӗ, вӗсене те шӑлама тытӑнтӑмӑр. Колхозниксемпе колхозницӑсен ӗçлес хастарлӑхӗ пысӑк. Тулӑх çитӗнекен тыра вӑхӑтра тата пӗр тӑкаксӑр пухса илме хатӗрленес тесе ăмăртса ӗçлетпӗр.

Ф. МОЛАЕВ,
Ишлей районӗнчи «Красный танк» колхоз председателӗ.

Аш-какай, сӗт-çу парса татнӑ

Шупашкар районӗнчи «Красный флот» колхоз июнӗн 15-мӗшӗ тӗлне государствӑна сӗт-çу парса татрӗ. Аш-какай 1944 çулшӑн йӑлтах панӑ тата 1945 çулшӑн 500 килограмм панӑ.

М. ВАСИЛЬЕВ.

РСФСР-па Чӑваш АССР-ӗн Верховный Совет Президиумӗсен Хисеплӗ грамотисене пани

1944 çулхи июлӗн 6-мӗшӗнче Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн председателӗ **З. А. Андреева** юлташ наградӑланӑ çынсене РСФСР-па Чӑваш АССР-ӗн Верховный Совет Президиумӗсен Хисеплӗ грамотисене пачӗ.

Халӑх сывлӑхне сыхлас ӗçре уйрӑмах паха ӗçсем тунӑшӑн РСФСР-ӑн тава тивӗçлӗ врачӗн Хисеплӗ грамотисене Шупашкар больницин главнӑй врачӗ Игнатий Максимович **Кузнецов** тата партипе совет активӗн стационарӗн главнӑй врачӗ Василий Степанович **Обухов** юлташсем илчӗç.

Музыка искусствинче уйрӑмах паха ӗçсем тунӑшӑн Чӑваш АССР-ӗн тава тивӗçлӗ артисчӗн Хисеплӗ грамотине Чӑвашсен ташӑпа юрӑ ансамблӗн артисчӗ Михаил Евгеньевич **Измайлов** юлташ илчӗ.

Кун хыççӑн Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн Хисеплӗ грамотисене музыка творчествинче çӗклес тӗлӗшпе уйрӑмах паха ӗçсем тунӑшӑн Чӑвашсен ташӑпа юрӑ ансамблӗн художествӑллӑ руководителӗ, композитор Филипп Миронович Лукин юлташ тата музыка искусствинче çитӗнӳсем тунӑшӑн ташӑпа юрӑ ансамблӗн артисчӗсем Зинаида Михайловна **Павловӑпа** Иван Дмитриевич **Шубин** юлташсем илчӗç.

Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн Хисеплӗ грамотисене çавӑн пекех тата ялхуçалӑхӗнче çитӗнӳсем тунӑшӑн, ялхуçалӑх производствин ыйтӑвӗсене лайӑх тивӗçтернӗшӗн тата ялхуçалӑхӗнче наука ӗçӗсем тунӑшӑн наградӑланисене пачӗç. Хисеплӗ грамотӑсене Шупашкар районӗнчи Максим Горький ячӗпе тӑракан колхозӑн ӗне сӑвакан **Н. А. Афанасьева**, Чӑваш АССР Çӗрӗç Халӑх Комиссариачӗн инженер-землеустроителӗ **С. Д. Данилов**, Чӑвашсен ялхуçалӑх институчӗн социализмлӑ ялхуçалӑхне организацилес ыйтупа ӗçлекен кафедрин заведующийӗ **П. А. Коренев**, ялхуçалӑх институчӗн çӗрӗç кафедрин заведующийӗ **Т. А. Крушилин**, ВЛКСМ Чӑваш Обкомӗн секретарӗ **Л. Х. Михайлов**, Чӑваш АССР Çӗрӗç Халӑх Комиссариачӗн пахча-çимӗç управленийӗн начальникӗ **Р. А. Осанов** тата ялхуçалӑх институчӗн йывăç-кураксене сыхлас тӗлӗшпе ӗçлекен кафедрин заведующийӗ **Н. С. Тураев** юлташсем илчӗç.

Производство планӗсене иртерсе тултарнӑшӑн Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн Хисеплӗ грамотисене цех начальникне **Г. М. Гольдман** юлташа, каменщике **Ф. М. Клементьев** юлташа, наладчицӑна **И. В. Башмачникова** юлташа, отдел начальникне **Д. Г. Парзсон** юлташа, цех начальникӗн заместительне **П. И. Пострянов** юлташа пачӗç.

Хӗрлӗ Çар валли резервсем вӗрентсе хатӗрлес ӗçе ăнăçлăн пурнăçа кӗртнӗшӗн Хисеплӗ грамотӑсем Елчӗкри вӗренӳ пункчӗн начальникӗн политика енӗпе ӗçленӗ заместительне, халӗ ВКП(б) Обкомӗн агитаципе пропаганда отделӗн инструкторӗ пулса ӗçлекенскере, **И. С. Васильев** юлташа тата Хӗрлӗ Çар валли резервсем хатӗрлеме активлӑн пулӑшнӑшӑн ВЛКСМ Чӑваш Обкомӗн секретарьне **Г. И. Петрухин** юлташа пачӗç.

Наградӑланисем, партипе правительствӑна тав туса, малашне тата та хастартарах ӗçлеме сӑмах пачӗç.

Юлашкинчен Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн председателӗ **З. А. Андреева** юлташ наградӑланисене ырӑ сунса, тӑшмана çӗнтерешшӗн вӑйсене ӳстерсе ӗçлеме чӗнчӗ.

САРСКОВ КОЛХОЗНИК САМОЛЕЧĔ

1. Ăмăрткайăк республика урлă вĕçет

Çантăлăк юлашки кунсенче кĕтнĕ пек юсанчĕ. Хĕвел хăйĕн ăшшине хĕрхенмесĕр сапса тăрать.

Лăпкă та ырă çантăлăк. Анчах сасартăк [illegible] хăватлă моторсен кĕрлевĕ илтĕнсе кайрĕ. [illegible] Белорусси вăрманĕсенче [illegible] тăван Хĕрлĕ Çарăн [illegible] малалла — хĕвеланăçнелле васкаççĕ [illegible]

[illegible]

Самолет штурвалне çирĕппĕн [illegible] Совет Союзĕн Геройĕ майор Орлов.

[illegible]

— Тултăп, Федот Никитич, — [illegible]

[illegible] пĕр тикĕс те тĕрĕс тăваткăлсем пулса выртаççĕ. Чăннипех те вĕсем темĕнле аслă этем сăрса тухнă чаплă кавирсем пек курăнаççĕ. Нимĕн те пытанса юлмасть. Селлкăпа акнă участоксем алăпа акнисенчен шăчах та расна палăраççĕ. Сăнаса пынă май, кăçал селккăсемпе ытларах акса хăварнине асăрхатăн. Анчах пур çĕрте те мар. Вăрнар районĕнчен Йĕпреç районнелле кĕнĕ чухне пейзаж палăрмаллах улшăнать. Вăрнар районĕн уйхирĕсем чылай тикĕсрех, шăйрăксем те, çумкурăкĕсем те сахалтарах. Ăçта çĕртме сухи ытларах туни те, ăçта утă ытларах çулни те, ăçта колхозниксем хирте йышлăнрах ĕçлени те, — пурте, пурте тĕлĕнмелле витĕр курăнать. Çĕртме тунă пусăсем Красноармейскипе Вăрнар районĕсенче анлăнрах сарăлса выртаççĕ. Мĕнле меслетпе ĕçлени те пытанса юлмасть. Красноармейски районĕнчи колхозсенче çум çумланă çĕрте темшĕн ытларах йышлă ушкăнсемпе пухăнса тăрса ĕçлеççĕ. Чăн та, суха тăвакансене каш-

[illegible]

— Ывăлăм, епле киле пĕлтĕн? — тет вăл Федот Никитичăн амăшĕ пек хăй чĕри çумне пăчăртаса. Анна Петровнăн куçĕсенче савăнăç куççулĕ курăнса каять.

— Акă, Андрей Михалч, санăн машину, — тет Орлов юлташ аллипе самолет çинелле кăтартса. — Тĕрĕсле, пăхса тух, хакла, пĕтĕмпех сан куçу умĕнче.

— Куратăп-ха, — тет самолет хуçи. Унтан вăл самолет патне çывăхарах пырать. Çÿллĕ те кĕрнеклĕ машинăн икĕ аяккине: «Улатăр районĕнчи «Красный луч» колхозăн колхозникĕнчен А. М. Сарсковран — Совет Союзĕн Геройне Ф. Н. Орлова» тесе çырнă. Андрей Михайлович, алтупанне çамки тĕлне тытса, чылайччен вуласа тăрать. Ик-виçĕ хут та вулать пулмалла вăл çав нумай мар, анчах питĕ нумая пĕлтерекен сăмахсене.

Çавăнтах, самолет çывăхĕнчех, митинг пуçланать.

Малтанах ВКП(б) обкомĕн секретарĕ Андреев юлташ сăмах илет. Вăл Отечественнăй аслă вăрçăн виçĕ çулталăкĕн ито-

[illegible]

çак самолетпа — Хĕрлĕ Çар воинне пана колхоз парнипе — пирĕн халăха пусмăрлама хапсăнакан нумай нимĕçсене пĕтерсе тăкăп, тесе шантаратăп. Эпĕ çак машинăна хамăн куçсене сыхланă пек сыхлăп, ун çинче вĕçсе пирĕн шанăçа чыслăн пурнăçлăп. Сывă пултăр пирĕн чаплă Тăван çĕршыв! Сывă пултăр пирĕн тăван Хĕрлĕ Çар! Сывă пултăр пирĕн сулпуç аслă Сталин!

Унтан Орлов юлташ тăракан çар чаçĕн представителĕ — старши лейтенант Стучинский, колхозри парторганизаци секретарĕ Ленин, ВКП(б) Улатăр райкомĕн секретарĕ Горбунов юлташсем тухса калаççĕ.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председательне Андреева юлташа сăмах параççĕ. Вăл совет халăхĕ Отечественнăй аслă вăрçă кунĕсенче патриотизмла хăватлă туйăмпа пурăнни, пирĕн çĕршыври халăхсен сталинла аслă туслăхĕ вăрçă вăхăтĕнче ытларах çирĕпленсе пыни çинчен калать. Андреева юлташ Чăваш АССР правительстви ячĕпе А. М. Сарскова тата Совет Союзĕн Геройне Ф. Н. Орлов майора хамăрăн Тăван çĕршывшăн патриотла ĕçсем тунăшăн тав тăвать, вĕсем урлă тылри тата фронтри мухтавлă боецсене салăмлать.

Колхозри митинг пĕр саслă пулса тырпулсене кăтартуллăн пухса кĕртме, Хĕрлĕ Çара хастарлă ĕçпе те, укçа-тенкĕпе те пулăшса тăма йышăнать.

Митинг хупăннă хыççăн Андрей Михайлович Сарсков Орлова хăйĕн килне илсе кайрĕ, унта вара пуян сĕтел хушшинче, Герой ячĕпе хушаматне çырса хунă кукăль патĕнче, мухтавлă летчик сывлăхĕшĕн черке çĕклерĕ.

— Манăн пĕр ывăла, — терĕ Сарсков, — нимĕçсем вĕлерчĕç. Тепри ним хыпарсăр çухалчĕ. Виççĕмĕшĕ акă кунта ларать. Ăна мана Тăван çĕршыв пачĕ. Манăн çĕнĕ ывăл пуриншĕн те тавăрĕ.

Федот Никитича «Красный луч» колхозра ăшшăн кĕтсе илчĕç. Вăл килнĕ ятпа яла флагсемпе илемлетнĕ. Колхозниксем ун çинчен хывнă юрăсене юрларĕç.

Тепĕр кунне сарлака çунатлă самолет сывлăша çĕкленчĕ те, çавăрăнса сывпуллашса, хăй çулне тытрĕ. Самолета пирĕн чаплă земляк Федот Никитич Орлов илсе пырать. Унпа пĕрле Андрей Михайлович Сарсков Герой тăракан чаçе хăй укçипе илнĕ боевой машинăпа строй умĕнче пама вĕçсе кайрĕ.

А. ЭСХЕЛЬ.
«Чăваш Коммуни» ятарласа кайнă корреспонденчĕ.

Çулйĕр строительствин уйăхлăхĕ

ÇУЛСЕМПЕ КĔПЕРСЕНЕ ЮСАРĔÇ

ПЕРВОМАЙСКОЕ, июлĕн 8-мĕшĕ. (Телефонпа). Çулйĕр строительствинчи уйăхлăхра районри нумай колхозсем тăрăшса ĕçлеççĕ. «Парижская коммуна», «Трудовик», «14 лет Октября» колхозсем хăйсен участокĕсенчи çулсемпе кĕперсене пĕтĕмпех юсаса пĕтерчĕç. Вĕсем çулсене яланах лайăх пăхса усраççĕ.

МАЛТА ПЫРАКАН ÇУЛЙĔР БРИГАДИ

ТĂВАЙ. Енĕш Нăрвашри «Красная Чувашия» колхозра çулйĕрсене пăхса усрама тата юсама уйрăм бригада тунă. Бригада кăçал нумай ĕç тунă. Пурĕ 250 кубометр çĕр чавса купаланă, çырхи шывсем ишĕлтернĕ канавсене юсанă, шыв юхмалли трубасем 16 лартнă, 18 километр хушшинчи çула якатнă тата 3 кĕпер юсанă. Кусемсĕр пуçне бригада ял хушшинче 4 пĕве тунă.

Бригада халĕ çулйĕр строительствин уйăхлăхне хутшăнса илнĕ обязательствăсене срокчен пурнăçа кĕртессишĕн кĕрешет.

ПЛАНА ИКĔ ХУТ ЫТЛА ИРТТЕРСЕ ТУЛТАРНĂ

КАЛИНИНО. Районри колхозсем çулйĕр строительствин уйăхлăхне активлăн хутшăнчĕç. Кашни колхоз хăйне панă плана срокчен пурнăçа кĕртессишĕн кĕрешет. Паянхи куна çăр ĕç планне икĕ хут ытла иртттерсе тултарнă. План тăрăх 3.000 кубометр çĕр чавалаcа купаламалла пулсан, 7.050 кубометр чавнă. Кĕперсемпе трубасене юсасси те ăнăçлăн пырать.

Çур çулхи плана иртттерсе тултартăмăр

ОКТЯБРЬСКОЕ, июлĕн 8-мĕшĕ. (Телефонпа). «Труд» артель коллективĕ пĕрремĕш çурçулти плана 106 процент тултарчĕ.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăланă Иванова юлташ ертсе пыракан комсомолецсемпе çамрăксен бригади мала тухрĕ. Унăн бригадинче 42 çын, вĕсем пурте нормăна иртттерсе тултараççĕ. Бригада хăйĕн планне 227 процент тултарчĕ.

И. МОКЕЕВ,
«Труд» артель председателĕ.

Танксемпе самолетсем тума

Канаш районĕнчи пур предприятисемпе колхозсенче те Хĕрлĕ Çар валли хĕçпăшал тума укçа пухасси сарăлса пырать. Вагонсем юсакан заводра 450.000 тенкĕ ытла, пир-авăр тĕртекен фабрикăра 35.000 тенкĕ пухнă. Нумай рабочисем çĕршер те пиншер тенкĕ параççĕ.

«Красная пламя» колхоз членĕ Е. М. Матвеева юлташ танксемпе самолетсем тума 25.000 тенкĕ пачĕ. Манăн укçа гитлеровецсене тĕпĕ-йĕрĕпех çапса аркатма пулăштăр, тет вăл. Укçа пухасси ытти колхозсенче те сарăлса пырать.

* * *

Тăвай районĕнчи «8-е марта» колхоз членĕсем Хĕрлĕ Çар валли танксем тума укçа пухма тытăнчĕç. Колхоз председателĕ Иван Евдокимов юлташ 12.000 тенкĕ, колхоз счетовочĕ Кузьма Сумкин тата бригадир Григорий Кириллов 5000-шер тенкĕ пачĕç. Нумай колхозниксем 1000-шер тенкĕ параççĕ.

Çурçĕр Францири вăрçă ĕçĕсем

Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ пĕлтернисем

ЛОНДОН, июлĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ паян ирхине пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă:

«Ла-Э-Дю-Пюишĕн пуçланса кайнă çапăçу халĕ те пырать-ха. Карантанпа Перье хушшинчи çултан хĕвелтухăçнерехре эпир Сентени еннелле малалла куçрăмăр. Кан хули секторĕнче нимĕнле улшăнусем те пулман.

Июлĕн 6-мĕшĕнче кăнтăрла иртсен тата каçхине те пирĕн авиаци пысăк вăйĕсем малтанхи пекех тăшман çулйĕрĕсене çĕмĕрсе пынă. Уйрăмах Парижпа Вьерзон хушшинчи района тата çав районран хĕвеланăçнерехрипе çурçĕр-хĕвеланăçнерехри территорие, Бретань патне тата çапăçусен районĕ патне çитиччченех вăйлă тапăннă».

* * *

ЛОНДОН, июлĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ паян каçхине пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă:

«Союзниксен çарĕсем Карантанпа Перье хушшинчи çул тăрăх кăштах кăнтăр-хĕвелтухăçнелле куçнă. Пирĕн çарсем Вир шывĕн леш енче пысăках мар плацдарм туртса илнĕ. Июлĕн 7-мĕшĕнче кăнтăрла çитиччен пирĕн авиаци сыран çийĕнче тата çапăçусен районĕ çийĕнче разведка тунă тата патруллесе çÿренĕ».

Италири вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, июлĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен главнăй штабĕ çапла пĕлтерет: тăшман хытă хирĕç тăрать, çапах та союзниксен çарĕсем пĕтĕм фронт талккăшĕпех малалла куçса пыраççĕ. Хăйĕн çарне васкаса каялла чакармалла ан пултăр тесе, тăшман контратакăсем тăвать, халăх пурăнакан пунктсене тата усă вырăнсене çирĕплетнĕ позицисем тума тăрăшса, пур майсемпе те усă курать. Американецсен 5-мĕш армийĕн чаçĕсем Ливорно хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехри Росиньяно-Мариттимо хулин виçĕ пайĕнчен икĕ пайне йышăнса тăраççĕ. Тинĕс хĕрринчи çак секторта тăшман Ливорно хулине хÿтĕлекен укреплениcсене, союзниксем десант антарас пулсан ăна сирсе яма май пултăр тесе, вăйлă çирĕплетет.

Ареццо хули районĕнче союзниксен çарĕсем кăштах малалла куçнă. Адриатика тинĕс хĕрринчи секторта тăшманăн контратакисене пурне те сирсе янă.

Союзниксен авиацийĕн пысăк соединенийĕсем тăшманăн Çурçĕр Италири тата Австрири объекчĕсене, çавăн пекех тата Югослави çыранĕ патĕнчи суднăсемпе тип çĕр çинчи объектсене те тапăннă.

ГЕРМАНИРИ НЕФТЬ ТАСАТАКАН ЗАВОДСЕМПЕ АВИАЦИ ЗАВОЧĔСЕМ ÇИНЕ БОМБĂСЕМ ПĂРАХНИ

ЛОНДОН, июлĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Американецсен Европăри сывлăш-çар вăйĕсен штабĕ çапла пĕлтернĕ: июлĕн 7-мĕшĕнче ирхине американецсен 750—1.000 йывăр бомбардировщикĕ Мокаури (Лейпциг çывăхĕнче), Люцкендорфри тата вăтаçĕр Германири ытти пунктсенчи авиаци завочĕсемпе нефть тасатакан заводсене тапăннă. Бомбардировщиксене йышлă истребительсем хÿтĕлесе пынă.

НИМĔÇСЕН САМОЛЕТ-СНАРЯДСЕН БАЗИСЕНЕ АНĂÇЛА ТАПĂННИ

ЛОНДОН, июлĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер ирхине Англи авиацийĕ 28 хутран кая мар нимĕçсен Ла-Манш районĕнчи торпеда катерĕсене атакăланă. 4 катера шыва путарнă, ытти 9 карапа сиенленĕ пулмалла.

Июлĕн 7-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англи бомбардировщикĕсем Хĕвеланăç Германири промышленность объекчĕсене тапăннă.

Ĕнер ирхине американецсен йывăр бомбардировщикĕсем Па-де-Кале районĕнче нимĕçсен самолет-снарядсем вĕçсе хăпармалли станцийĕсене ăнăçлă тапăннă. 11 станцие бомбăсем тÿрех пырса тивни палăрнă.

Çакăнпа пĕр вăхăтрах çапла пĕлтернĕ: июлĕн 5-мĕшĕнче тата 6-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле нимĕçсем Англи çине янă самолет-снарядсен пысăк пайне Англи летчикĕсем персе ÿкернĕ.

Болгари хаçачĕсем Хĕрлĕ Çарăн ăнăçăвĕсене пытараççĕ

СОФИЯ, июлĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Совет Союзĕпе Германи фронтĕнчи вăрçă ĕçĕсем çинчен тата Хĕрлĕ Çар наступленийĕ çинчен Болгари хаçачĕсенче пăтраштарса, суйса çыраççĕ. Хĕрлĕ Çар наступлени тума пуçланă чухне — совет çарĕсен пур атакисене те сирсе янă, тесе çыратчĕç. Унтан сасартăк хаçатсем фронтра совет çарĕсем, артиллери тата авиаци калама çук нумай пухса тăратни çинчен тата нимĕçсем оборонăллă йывăр çапăçусем туни çинчен çырма пуçларĕç. Çав вăхăтрах «Днес» хаçат июлĕн 28-мĕшĕнче тухнă номерти пĕр заголовокра çапла çырнă: «Хаяр çапăçусем... Смоленск патĕнче пыраççĕ», тенĕ. Июлĕн 4-мĕшĕнче вăл çапла çырнă: «Совет çарĕсем халĕ те Борисов хули патĕнче тата Березина шывĕн вăтам тăрăхĕнчи районра тăраççĕ», тенĕ.

АМЕРИКАНЕЦСЕН «ВĔÇЕКЕН КРЕПОСТЬ» ЙЫШШИ ВĂЙЛĂРАН ВĂЙЛĂ САМОЛЕЧĔСЕМ ЯПОНИЕ ТАПĂННИ

ЛОНДОН, июлĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, паян американецсен «Вĕçекен крепость» йышши вăйлăран вăйлă самолечĕсем Японин Сасебори тинĕс-çар базине тапăннă. Унсăр пуçне, Яватари промышленность предприятийĕсем çине те бомбăсем пăрахнă. «Вĕçекен крепость» йышши самолетсем Явата çине малтанхи хут июнĕн 15-мĕшĕнче бомбăсем пăрахнă пулнă. Американецсен бомбардировщикĕсем тапăннă хуласем иккĕшĕ те Кюсю утравĕ çинче.

АМЕРИКАНЕЦСЕН «Б-29» ЙЫШШИ ÇĔНĔ БОМБАРДИРОВЩИКĔ

Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Американецсен «Б-29» йышши хăватлăран та хăватлă бомбардировщикĕн анлăшĕ пĕр çунаттинчен пуçласа тепĕр çунаттине çитиччен 42,36 метр. Самолет тăршшĕ 29,4 метр. Ун çинчи пропеллерсем тăватă лапаткаллă, вĕсен диаметрĕ ку таранччченхи пропеллерсеннинчен вăрăмрах, 4,95 метр. Самолет çине çăлтăр евĕрлĕ «Райт Циклон» йышши 4 мотор вырнаcтарса лартнă, вĕсен кашнин 18 цилиндр. Çак моторсем самолет вĕçсе хăпарнă чухне 2.200 лаша вăйĕ чухлĕ вăй параççĕ. Çак бомбардировщиксене туса кăларакан «Боинг» фирмăн представителĕ çапла каланă: «Кун пек самолетсем ку таранччен тĕнчере ниçта та пулман-ха. Вăл питĕ йывăр груз илме пултарать, вăл пур самолетсенчен те хăвăртрах, инçерех тата çÿлерех вĕçет. Унăн хăвăртлăхĕ чи хăвăрт вĕçекен истребительсемпе перехватчиксен хăвăртлăхĕ пек. (ТАСС).

КĔСКЕН

● США государственнăй департаменчĕ тăшманпа çыхăну тытнăшăн бойкот тумалли фирмăсен çĕнĕ списокне пичетлесе кăларнă. Çав списока финсен 69 фирми, шведсен 2 фирми, испанецсен 25 фирми тата аргентинецсен 14 фирми кĕреççĕ.

● Монреал хулинче çак çулхи сентябрĕн 15-мĕшĕнче ЮНРРА (пĕрлешÿллĕ нацисен çĕршывĕсене пулăшу парса тăрас тĕлĕшпе ĕçлекен администраци) совечĕн иккĕмĕш сессийĕ уçăлмалла. Малтан палăртнă тăрăх, çав сесси иртнĕ июнĕн 23-мĕшĕнче уçăлмаллаччĕ. Ку срока Европăна союзниксен çарĕсем кĕме хатĕрленнĕ май Англире çынсем куçса çÿрес ирĕке хĕснĕ пирки малалла тăснă.

● США-ра американецсен Хĕрлĕ Хĕресĕн председателĕ Норман Дэвис вилнĕ. Вăл 66 çулта пулнă.

● Июнь уйăхĕнче Европа çинче (Нормандие шута илмесĕр) Англи авиацийĕн 188 самолет, Германи авиацийĕн 190 самолет пĕтнĕ. Итали çийĕнче Германин 460 самолет, союзниксен 373 самолет пĕтнĕ.

● Виши «правительствин» пропагандăпа информаци «министрне» Филипп Анриона вĕлернĕ хыççăн гитлеровецсемпе Виши полицийĕ Францин пысăк хулисенче ухтарман кил хăвармаççĕ, темĕн чухлĕ халăха тыта-тыта хупаççĕ. Парижра 15.000 çынна тытса хупнă ĕнтĕ. Францин пысăк хулисенче нумайĕшĕнче осаднăй положени туса хунă.

Эрик А. Джонстон господин Совет Союзĕнчен кайни

Июлĕн 7-мĕшĕнче Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен суту-илÿ палатин председателĕ г-н Эрик А. Джонстон господин Совет Союзĕнчен тухса кайнă. Совет Союзĕнче пулнă вăхăтра Эрик А. Джонстон господин чылай хуласенчи промышленность предприятийĕсене тата культура учрежденийĕсене пырса курнă. (ТАСС).

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Тĕнчери лару-тăру

Иртнĕ эрне те, ун умĕнхи пекех, Хĕрлĕ Çар вăйлă наступлени туса пынипе палăрса тăчĕ. Нимĕçсен нумай вăхăтлăха тунă оборонине çĕмĕрсе пырса, тăшман питĕ вăйлă хирĕç тăнине сирсе пырса, унăн çыннисемпе техникине аркатса пырса, пирĕн çарсем хĕвеланăçнелле малтан малалла куçса пыраççĕ. Вĕсем пирĕн Тăван çĕршыв, пирĕн аслă Сталин пĕтĕм Совет çĕрне гитлерла ирсĕрсенчен ирĕке кăларма хушнине пурнăçа кĕртсе пыраççĕ.

Июнĕн 28-мĕшĕнче Хĕрлĕ Çар Карело-Финн республикин столицине Петрозаводск хулине ирĕке кăларчĕ. Июлĕн 3-мĕшĕнче вăл фашистла нимĕç захватчикĕсене Белорусси столицинчен Минск хулинчен сирпĕтсе кăларчĕ. Июлĕн 6-мĕшĕнче Мускав Ковель хулине ирĕке кăларнишĕн салют пачĕ.

Петрозаводск—Ковель. Хĕрлĕ Çар наступленийĕн анлăшĕ çавăн пек ĕнтĕ. Наступлени пуçласа янă позицисем çине çавăрăнса пăхсан, нимĕçсем мĕн тери пысăк поражени тÿсни паллă пулса тăрать.

Гитлеровецсем тем пысăкăш территорисене çеç çухатмаççĕ. Совет Информаци Бюровĕ пĕлтернĕ тăрăх, тăшман çынсемпе техника тĕлĕшĕнчен те калама çук пысăк çухатусем тÿсет.

Швецире тухакан «Гетеборгс хандельстиднинген» хаçат Хĕрлĕ Çар Минск хулине илнĕ хыççăн çапла çырчĕ: «Ладога кÿллинчен çурçĕртерехре тата кăнтăрарахра наступлени тунă хыççăн Белорусси фронтĕнче вырăссем çав тери хăвăрт тата калама çук вăйлă пырса çапрĕç. Çак ĕç часах Хĕвелтухăçĕнчи чи пахă операцисенчен пĕри пулса тăчĕ. Витебскпа Минск хулисене штурмласа тытса илнĕ. Нимĕçсен пысăк подразделенийĕсене е пĕтерсе тăкнă, е вĕсем тыткăна лекнĕ. Нимĕçсем калама çук пысăк çухатусем тÿснĕ... Вĕсем поражени тÿсни уççăнах курăнса тăрать».

Нимĕç çарĕсем Совет Союзĕпе Германи фронтĕнче мĕн пирки поражени тÿснине ăнлантарса пама хăтланса, пуç тÿпинчен пуçласа ура тупанне çитиччченех суеçе тухнă фашистла нимĕç пропаганди темĕн те пĕр каласа пăхать. Гитлерăн информаци бюровĕ, аптăраса çитсе, çапла пакăлтатать. «Хĕвелтухăç фрончĕн вăтаçĕрти участокĕнче оборонăллă йывăр çапăçу малтан шухăшланă пекех вĕçленчĕ (эпĕ палăртса хунă—Я. В.). Тăшманăн Минск хулинчен кăнтăртарахра тата çурçĕртерехре наступлени туса пыракан группировкисем Барановичипе Молодечно районне куçнă, вĕсем çав хушăри рубежсене тытса илессшĕн». Молодечно хулине совет çарĕсем тытса илнĕ ĕнтĕ. Нимĕç агентстви юмăç шыв çине пăхнă пек пăхать. Пăхтăр, вăл нумай япалана курĕ-ха!

Хĕрлĕ Çарăн хальхи наступленийĕ вăл çав тери хăвăрт пулса пынипе палăрса тăрать. Хĕрлĕ Çар совет çĕрне ăнăçлăн ирĕке кăларса пырать, гитлерла йыткĕтĕвĕсене пĕтерсе пырать. Вăл тăшмана совет çĕрĕ çинчен кăларса ямасть, ăна хупăрла-хупăрла илет, парăнмасан — пĕтерсе тăкать.

Хĕрлĕ Çар вирлĕн наступлени туса пынă пирки çав тери пысăк поражени тÿсни фашистла Германин власть пуçĕнче тăракан çыннисене хăратса пăрахнă. Ют çĕршывсенчи хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, нимĕçсем васкаса Хĕвелтухăç фронтне хăйсен юлашки резервĕсене куçараççĕ. Çакăнтан пĕрре те тĕлĕнмелли çук, вăл кĕтмен çĕртен пулнă япала мар. Хĕрлĕ Çар наступлени туни Европăри вăрçăпа стратеги лару-тăрăвне питĕ хытă улăштарчĕ. Вăрçă ĕнтĕ Германи чиккисем патне çывăхарса пырать.

Фашистла нимĕç тискер кайăкĕ вăйлă хирĕç тăма хатĕрленет, вăл çак кĕрешÿ вилĕмлĕ çивĕч кĕрешÿ пулнине ăнланать. Малашнехи çапăçусем ытла та вăйлă, ытла та хаяр çапăçусем пулĕç. Вăрçăн пĕтĕм ĕçе татса паракан юлашки тапхăрĕ, паллах ĕнтĕ, чи йывăр тапхăр пулĕ, вăл хамăрăн пĕтĕм вăя пухса кĕрешме хушать.

Пирĕн вăл вăйсем пурте пур. Вĕсем ÿссе пыраççĕ. Вĕсем ÿссе пынине пула ĕнтĕ эпир çĕнтеретпĕрех, нимĕçсем поражени тÿсеççех.

* * *

Гитлеровецсем хăйсен резервĕсене хĕвелтухăçнелле куçараççĕ. Совет Союзĕпе Германи фрончĕ халь те, ĕлĕкхи пекех, чи тĕп фронт, ĕçе татса паракан фронт пулса тăнине вĕсем пĕлеççĕ. Анчах та çарсене Хĕвелтухăç фронтне куçарни хĕвеланăçĕнчипе кăнтăрти оборонăна вăйсăрлатнине пĕлтерет. Вăрçă ĕçĕсем Италире мĕнле аталанса пыни çак тĕлĕшпе кăтартуллă пулса тăрать. Кессельринг çав тери пысăк поражени тÿсет пулин те, вăл Германирен çĕнĕ вăйсем илмен, илеймест те.

Хĕвеланăçĕнче оборона тытма хушнă генералсен ĕçĕ те çавăн пекех пуласси паллах. Унта ĕçсем начар пынине нимĕçсен Хĕвеланăçĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен главнокомандующине Рундштедт генерал-фельдмаршала вырăнтан кăларни питĕ лайăх кăтартса парать. Рундштедт вырăнне халь фон Клюге генерал-фельдмаршала лартнă, çак фельдмаршала Совет Союзĕпе Германи фронтĕнче самаях ислетнĕччĕ-ха. Ют çĕршывсенчи хаçатсем çапла калаççĕ: Рундштедт — айăпсăртан айăпа тухнă çын, унăн туллашакан «фюрерăн» çылăхĕсемшĕн тÿсмелле пулса тăчĕ, теççĕ. Союзниксен çарĕсем Çурçĕр Францие пырса ансан, Гитлер—Хĕвеланăçĕнчи оборонăна ертсе пырассине хам çине илетĕп, тесе пĕлтернĕччĕ.

Рундштедта вырăнтан кăларни нимĕçсем хăйсем поражени тÿснине йышăнни пулса тăрать. Союзниксен çарĕсем континента пырса кĕни уйăх çитрĕ ĕнтĕ. Вĕсене тинĕсе ывăтса яман, темиçе пая уйăрса пăрахман, пĕтерсе тăкман. Йăлтах урăхла. Вĕсем ĕнтĕ Шербура тытса илчĕç, вĕсен аллинче меллĕ плацдарм пур, вĕсем континента çĕнĕ те çĕнĕ вăйсем илсе пыраççĕ. Наступление сарса аслăлатма, континента пырса кĕмелли çарăн тĕп вăйĕсене çапăçу хирне яма кирлĕ условисем туса хунă ĕнтĕ. Хĕрлĕ Çар ăнăçлă наступлени туса пыни, нимĕçсем Совет Союзĕпе Германи фронтĕнче поражениcсемпе çухатусем тÿсни çав лайăх условисене тата нумай ÿстерсе яраççĕ.

* * *

Швейцарире тухакан «Нейе цюрхер цейтунг» хаçат çапла пĕлтерет: Венгрире тĕрмесем çитми пулчĕç... Венгрире çынсене çав тери йышлăн тытса хупма пуçланипе нумай гостиницăсемпе шкулсене тата ытти çуртсене те тĕрмесем туса хунă. Пĕтĕм çĕршывĕпех концентрациллĕ лагерьсем туса тултарнă. Заложниксем тытса хупас йĕрке туса хунă. Саботажпа сăтăрла ĕçсем тăвакансене тупаймасан, гитлеровецсем çав заложниксене персе вĕлереççĕ. Оккупациллĕ режимăн хăшпĕр паллисем çавăн пек ĕнтĕ. Гитлерăн вăрă-хурахла лагерĕнче тăнине пула ĕнтĕ Венгри çавăч пек кунçул «туянчĕ». Анчах та ку вăл ĕçĕн пĕр енĕ кăна-ха, вăл Хортипе власть пуçĕнче тăракан шайккă хăйĕн çĕршывне сутнишĕн Венгри халăхĕ мĕн тÿснине кăтартса парать. Ĕçĕн тепĕр енĕ ак çакă: çынсене йышлăн арестлени тата хаяррăн тыткалани Венгрире политикăллă лару-тăру вĕçне çитиччченех çивĕчленсе кайнине кăтартса парать. Венгри ĕнтĕ пĕтсе ларас патне çитсе пырать.

Гитлерăн кашни вассалĕн кунçулĕ çавăн пек пулать ĕнтĕ. Ĕç чăнах та çавăн пек пуласси Финляндири лару-тăру пуринчен те лайăхрах кăтартса парать. Финлянди вăл хăйĕн правителĕсен преступникла, пĕтерсе лартмалла политикине пула çавăн пек лару-тăрăва кĕрсе ÿкрĕ.

Финлянди премьер-министрĕ Линкомиес юлашки хут тухса каланă чухне çапла каланă: Германипе Финлянди пĕр вăрçă вăрçаççĕ, тенĕ. Çапла калани вăл Финлянди пуçĕнче тăракан çынсем хăйсен пÿркенчĕкне хывса пăрахнине пĕлтерет. Вĕсем халь пĕтĕм тĕнче умне Германие сутăннă çынсем, фашистла нимĕç тарçисем, хăйсен пĕтĕм пурнăçне Гитлерпа çыхăнтарнă çынсем пек пулса тухрĕç.

Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсем Финляндипе дипломатиллĕ çыхăнма пăрахни Финляндин власть пуçĕнче тăракан шайккин политики пĕтĕмпех путланса ларнине кăтартса парать.

Финн гитлеровецĕсем хăйсене хăйсем çапла йăпатма тăрăшаççĕ: Германи пире «пулăшĕ», теççĕ. Анчах та çак шанчăк вăл пĕтĕмпех вырăнсăр. Гитлерла Германие хăйне те ĕнтĕ халĕ никам та, нимĕн те пулăшма пултараймасть. Вăл пĕтсе ларас патнелле пырать. Ирĕклĕхе юратакан халăхсене хирĕç преступлени тăвас ĕçре хăйне çав Германипе çыхăнтарнă çĕршывсен пурин те çавăн пекех пĕр чăпсăр пĕтсе лармалла пулать.

Я. ВИКТОРОВ.

Хусанти Н. Э. Бауман ячĕпе тăракан **Ветеринари институчĕ** 1-мĕш курса вĕренме илесси çинчен пĕлтерет.

Вĕренме кĕрес текенсен вырăс чĕлхипе, литературăпа, физикăпа тата химипе испытани тытмалла.

1943-мĕшпе 1944-мĕш çулсенче вăтам шкултан отличник аттестачĕпе вĕренсе тухнисене испытанисĕрех илеççĕ.

Заявленисене августăн 31-мĕшĕччен памалла. Вĕренме кĕмелли экзамен сентябрĕн 1-мĕшĕпе 20-мĕшĕ хушшинче пулать. Октябрĕн 1-мĕшĕнче вĕрентме тытăнаççĕ.

Заявленисене директор ячĕпе çырмалла. Заявленипе пĕрле çак документсене ямалла: вăтам шкултан вĕренсе тухнине кăтартакан аттестат (аттестатне хăйне, копине мар), автобиографи, 3 фотокарточка, çар служби тĕлĕшпе мĕнле шутланса тăнине кăтартакан справка (ăна военнообязаннăйсен ямалла). Паспорта кашни хăй кăтартать.

Адрес: г. Казань, угол ул. Красина и Б. Красной, 5/8.

Чăвашзаготживконторăна ялан ĕçлеме бухгалтерсем, пункт заведующийĕ, инспекторсем, заготовительсем, секретарь-машинистка тата выльăх ăсатакансем кирлĕ. Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, Учительская, 39.

Шупашкарти сăра заводне хуçалăх заведующийĕ, конюх, лавăççем, охранниксем кирлĕ. Ĕçлекенсене хваттер параççĕ. Столовăй пур. Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, Ленинградская, 35.

ШУПАШКАРТИ КИНОТЕАТР

паян, июлĕн 9-мĕшĕнче,
ЮЛАШКИ КУН
акăлчансен
«БАГДАДСКИЙ ВОР»
ятлă çĕнĕ, илемлĕ, темиçе сăрпа ÿкернĕ фильмне кăтартать.
Сеанссем çак вăхăтра пуçланаççĕ: 18, 20, 22 сехетре.

ПАЯНАХ КĂНТĂРЛА
саслă, илемлĕ фильм
«ТИМУРПА УНĂН КОМАНДИ»
кăтартаççĕ.
Сеанссем çак вăхăтра пуçланаççĕ: 12, 14, 16 сехетре.

Ырантан, июлĕн 10-мĕшĕнчен, пуçласа, кунсеренех илемлĕ, саслă çĕнĕ фильм
«НЕБО МОСКВЫ»
кăтартаççĕ.
Сеанссем çак вăхăтра пуçланаççĕ: 12, 14, 16, 18, 20, 22 сехетре.
Билетсене ирхине 10 сехетрен пуçласа сутаççĕ.

Главнефтеснабăн чăваш управленине строительствăра ĕçлеме çакăн пек работниксем кирлĕ: ĕç йĕркелекен, бухгалтер, главнăй механик тата тĕрлĕ рабочисем.
Ĕçлеме илнисене хваттер тата пахчасем параççĕ. Ларек пур. Столовăй уçăлать. Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, Дом печати, 4-й этаж, комната № 44. Телефон 3—83. Главнăй инженертан ыйтмалла.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместительпе секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 00248 Типография №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. 6. 59Х42 п. л. Тираж 14.400 экз